**ПУÇЛАМĂШ ШКУЛТА ВĔРЕНЕКЕНСЕН ЧĂВАШ ПУПЛЕВ АТАЛАНĂВĔН ШАЙĔ**

Чĕлхе тĕлĕшĕнчен пуçламăш шкулта илнĕ пĕлӳ-ăслай вĕренекенсемшĕн питех те пĕлтерĕшлĕ пулни кĕрет. Çыхăнуллă калаçма -çырма , итлеме пултараймасăр ытти пур предмета вĕренме те кансĕр. Кунпа пĕрлех пуçламăш шкулти вĕренӳ малашнехи пĕлӳ-ăслай никĕсĕ пулнине те асра тытмалла.

Малтанхи тапхăрта ачана ăнăçлă вĕренсе пыма вара, мĕн каласан та, тăван чĕлхе пулăшать. Çакна çирĕплетсе паллă меслетçĕ Ф.И.Буслаев çапла каланă: «Родной язык так сросся с личностью ребенка, что учить оному – значит вместе с тем развивать духовные способности учащегося». [2]

Вăл калани паянхи куншăн та вăйра. Ачан ăс-тăн ӳсĕмĕ тăван пуплев аталанăвĕпе пĕрле кăна мар, ытларах тăван пуплев пулăшнипе пулса пырать.

Çакă пуçламăш классенче ачасене тăван чĕлхене вĕрентессин пĕлтерĕшĕпе яваплăхне питех те ӳстерет. Ĕç ăнăçлăхĕ вара ачасен мехелĕнчен çеç мар, вĕренĕве мĕнле йĕркеленинчен те нумай килет. Вăл шутра ачасен пĕлӳ-ăслайĕ, хăнăхăвĕсем еплерех йĕркеленсе пынине сăнаса-тĕрĕслесе, хакласа тăнинчен те. Çакăн çине вĕренĕвĕн çĕнĕ стандарчĕсенче уйрăмах пусăмланă. Стандарт ыйтнипе килĕшӳллĕ ачасен пĕлӳ илес туртăмне аталантарни; йăнăшсене тишкерме, вĕсенчен хăтăлса пыма вĕрентни; пĕлӳ илни мĕн тума кирлине, мĕншĕн пĕлтерĕшлĕ пулнине уçса пани; ачасен пĕл\ шайне куллен сăнаса-хакласа палĕртни тĕпре пулмалла. Çавăн пекех ачасене харкам ĕçĕсене хăйсен тĕллĕн хаклама, пĕр-пĕрин .=не хак пама та вĕрентмелле.

Ачасен ĕçĕсене =ĕнĕ стандартпа килĕшӳллĕ хаклани тĕрлĕ майпа пулса пыма пултарать. Вăл шутра ăмăртусем (олимпиадăсем, викторинăсем, конкурссем) урлă та.

Тĕрлĕ шайри олимпиадăсемирттерни шăпах ачасене хăйсем вĕренӳ программинче палăртнă задачăсене мĕнлерех пурнăçласа пынине çеç мар, харкам мехелне (мĕн тума пултарнине) палăртма та пулăшать. Кун йышши ăмăртусенче сĕнекен ĕçсем яланах программăра кăтартнисенчен содержани тĕлĕшĕнчен те, форми тĕлĕшĕнчен те кăткăслăхĕпе, кăсăклăхĕпе чылай уйрăлса тăраççĕ. Çавăнпа çакăн пек ĕçсен пĕлтерĕшĕпе функцийĕсем самай анлă. Вĕсем малтан асăннисемсĕр пуçне тата ачасене тăван чĕлхепе кăсăклантараса ярас, вĕсен тăван чĕлхене тарăнрах пĕлес туйăмне амалантарса ярса аталантарса пырас задачăсене ăнăçлăрах пурнăçласа пыма та пулăшаççĕ.

Малалла Педагогикăпа психологи тĕпчев институчĕ нарăс уйăхĕн 1 – 7-мĕшĕнче йĕркелесе ирттернĕ «Радиус» Пысăк олимпиадăн чăваш чĕлхи секцийĕнчи результатсене пăхса тухăпăр. Калаçу пуçламăш класс ачисем пурнăçланă ĕçсем тавра пулĕ.

Чи малтанах кĕскен олимпиада ыйтăвĕсемпе ĕçĕсене мĕне кура калăплани çинче чарăнăпăр. Вĕсене паянхи куна пуçламăш шкулта вĕренекенсене чĕлхе тĕлĕшĕнчен мĕне вĕрентмеллине, епле аталантарса пымаллине шута илсе йĕркеленĕ.

Хальхи тапхăрта чĕлхене вĕрентес ĕç содержанийĕ самай кăткăс. Çакă чĕлхен обществăри функцийĕсен анлăшĕпе çыхăннă. Чĕлхе ачашăн хутшăну хатĕрĕ çеç мар: вăл уншăн ăс-тăнне, пуплевне аталантармалли, кăмăл-сипетне, туйăмне йĕркелемелли, таврари чăнлăха тĕпчемелли хатĕр те пулать. Вĕренӳ ĕç-хĕлне çакăн пек анлă пăхни ачана чĕлхе тĕлĕшĕнчен аталаннă харкам пек çитĕнтерме май парать.Лингводидактикăра халĕ чĕлхене алла илессине (языковое развитие) тĕпе хураççĕ. Ачасене чĕлхе тытăмне çеç мар, пуплев ĕç-хĕлне (калу, çыру, вулав, итлев), хутшăну калăпĕсене, пуплев культурине вĕрентмелле, халăх историйĕпе, культурипе паллаштармалла. Ку вара ачана чĕлхе тĕлĕшĕнчен аталаннă харкам (языковая личность) пулса ӳсме пулăшассипе çыхăннă. [1]

Çапла вара, паллă меслетçĕсем (Рамзаева Т.Г.) пуçламăш шкулта чĕлхене вĕрентес ĕçре çак компонетсем пулмаллине палăртаççĕ: чĕлхе тытăмне вĕрентесси (тĕп ăнлавсемпе пулăмсем, правилăсем; вĕсем çинче никĕсленсе йĕркеленекен чĕлхепĕлĕвĕсемпе ăслайĕсем), пуплев ĕç-хĕлне алла илесси (вулав, çыру, калу, итлев; пуплев пĕлĕвĕсемпе вĕсем çинче никĕсленсе йĕркеленекен тĕрле шайри пуплев ăслай-хăнăхăвĕ), хутшăну пуплев культурине вĕрентесси, халăх культурипе паллаштарса пырасси. [4]

Çакна шута илсе олимпиадăра вĕренекенсене пурĕ 12 ĕç сĕннĕ. Малтанах палăртса хăвармалла, ыйтусемпе ĕçсем пурте чăваш шкулĕн 1-4 классĕсен «Тăван чĕлхепе литература вулавĕн тĕслĕх программисемпе» килĕшсе тăраççĕ. [3] Вĕсенчен пĕр ушкăнĕ ачасем тăван чĕлхен тĕп ăнлавĕсемпе тата пулăмĕсемпе, правилисемпе; вĕсем çинче никĕсленсе йĕркеленекен чĕлхепĕлĕвĕсемпе тата ăслайĕсемпе çыхăннă. Виççĕмĕш класра вĕренекенсене сĕннĕ ыйтусене илес пулсан, кусем 4 – 7- мĕш ĕççсем (*4. Çемçетӳ палли (ь) ытлашши сăмаха палăрт.Укажи слово, где мягкий знак (ь) лишний. 5.Сăмахсене алфавит йĕркипе лартса тух. Переставь слова в алфавитном порядке. 6. Ытлашши сăмахĕ хăшĕ? Которое слово лишнее? 7. Хăш йĕркере йăнăш çырнă сăмах пур? В какой строке имеется слово с ошибкой?).* Тăваттăмĕш класрисене сĕннисенчен – 1-мĕш тата 2-мĕш, 4-мĕш тата 5-мĕш ĕçсем (*1. Хăш сăмахĕ ытлашши? Которое слово лишнее? 2. Хăш*

*сăмахĕ глагол мар? Какое слово не является глаголом? 4. Хăш сăмахра çемçетӳ палли (ь) кирлĕ? В каком слове нужен мягкий знак (ь)? 5. Хăшĕ хутăш сăмах? Какое слово смешанное?).*

Ачасенчен ытларахăшĕ çак ĕçсене тĕрĕс пурнăçланă. Йăнăшсем те сахал янă. Вĕренекенсенчен пĕри - *лч, нч* пĕрлешĕвĕсемлĕ сăмахсенче çемçетӳ палли (ь) тĕрĕс мар лартнă (*пăньчă)*. Çакă вĕренекенсем çыру ĕçĕсенче пур чухне те уроксенче паллашнă правилăсемпе усă курма пĕлейменнипе çыхăннă пулĕ тетпĕр, сĕнни евĕрлĕ ĕçсене пурнăçланă чухне вĕсем ытларах хăйсен сасă сисĕмне шанаççĕ пулмалла. Иккĕшĕ - хутăш сăмаха тĕрĕс палăртайман (*тăван)*. Ку ачасен сасă тишкерĕвĕн хăнăхăвĕсем çирĕпленсе çитейменнине кăтартать пулĕ. Виççĕшĕ сас палли ятне пĕлеймен. Ку вара алфавитпа паллашнă чухне çак ыйтăва тимлеменни ĕнтĕ.

Çапла вара олимпиадăна хутшăннисем чăваш чĕлхи тытăмне тĕслĕхлĕ программăра кăтартнă шайра аван пĕлнине палăртмалла. Ĕç пахалăхĕ, паллах, ачасем олимпиадара сĕннĕ ĕçсене кĕрет пурнăçламаннипе вĕсен тĕрлĕ пулăшу хатĕрĕсемпе (справочниксемпе, вĕренӳ пособийĕсемпе, словарьсемпе) усă курма май пулнинчен те килнĕ пулĕ тетпĕр. Анчах çакă, пирĕн шутпа, пĕрре те сивлемелли пулăм мар. Халĕ хатĕр пĕлӳ йышăнса аса хывасси тĕпре мар: ачасене мĕн пĕчĕкрен вĕренме вĕрентмелле. Ку вара тӳреммĕнех вĕсене пулăшу хатĕрĕсемпе усă курма хăнăхтарма хистет.

Олимпиадăра сĕннĕ ĕçсенчен ытларахăшĕ вĕренекенсем пуплев ĕç-хĕлне алла илессипе, ачасен пуплев пĕлĕвĕсемпе вĕсем çинче никĕсленсе йĕркеленекен тĕрлĕ шайри пуплев ăслай-хăнăхăвĕпе çыхăннă. Çакăн йышши ĕçсене епле пурнăçланине тишкернĕ майăн ачасем сăмах майлашăвĕпе предложени шайĕнче ĕçлеме аван вĕренсе пыни курăнать.1-мĕш (3-мĕш класс) тата 6-мĕш та 7мĕш (4-мĕш класс) ĕçсенче ачасен пăтраштарнă сăмахсенчен предложени, предложенисене йĕркипе вырнаçтарса текст калăпламалла пулнă. (*1. Пăтраштарнă сăмахсенчен предложени йĕркелесе çыр. Восстанови деформированное предложение. – 3-мĕш класс; 6. Пăтраштарнă сăмахсенчен предложени йĕркеле. Восстанови деформированное предложение. 7. Предложенисене йĕркипе вырнаçтарса тух. Текста ят пар. Обозначь цифрами порядок предложений. Текст озаглавь. – 4 –мĕш класс)*

Çакăн евĕрлĕ ĕçсем ачасен çыхăнуллă çыру хăнăхăвĕсене аталантарас тĕлĕшпе малтанхи тапхăрта питех те паха шутланаççĕ. Вĕсене пурнăçланă май ачасем уйрăм предложенисемпе текстсем еплерех йĕркеленнине ăнланса пыраççĕ. Вĕренекенсемшĕн пăтраштарнă сăмахсенчен предложенисем йĕркелесси те (1мĕш тата 6-мĕш ĕç), предложенисене йĕркипе вырнаçтарса тухса текст калăпласси, ăна ят парасси те (7-мĕш ĕç) чăрмавлă пулманнине ырласа палăртмалла.

Вĕренекенсем текста вуласа йышăнма, ăнланма пултарни те палăрчĕ. Вĕсем панă текст тăрăх ыйтусене, тĕпрен илсен, тĕрĕс хуравлама пултарнă. Çапахта ачасен ĕçĕсене тишкернĕ май вĕсенчен ытларахăшĕ ыйтусене ытларах текст çине тĕревленсе е хăш чухне тата текстри предложенисене туреммĕн çырса илсе хуравлани курăнать. Харкам тĕллен калăпланă хуравсем сахалтарах. Хăйтĕллĕнлĕх çителĕксĕр.

4-мĕш класс ачисене текст тăрăх сĕннĕ ыйтусем хушшинче уйлама хистекенни те пур*(Эскам çунана мĕн пирки туртайман?).* Ачасенчен ытларахăшĕ туллин уйлама йывăрланса тăнă пулмалла, ыйтăва кĕскен кăна хуравланă. Апла пулсан, малашне ачасен уйлав хăнăхтарăвĕсене аталантарас тĕлĕшпе тĕллевлĕ ĕçлемелле пулĕ.

Олимпиадăна хутшăннисен (виççĕмĕш классен те, тăваттăмĕш классен те) ĕçĕсенче палăрнă йăнăшсемпе çитменлĕхсенчен ытларахăшĕ 11 - 12-мĕш хушусене пурнăçлассипе çыхăннă. Ку ĕçсем - ачасен текст компетенцийĕсем еплерех йĕркеленсе пынине, вăл шутра текстăн тĕрлĕ тĕсне (калав, сăнлав, уйлав) клăплас (репродуктивлă тата продуктивлă шайра) пултарулăхĕ мĕнлерех аталаннине кăтартаканнисем.

11-мĕш ĕçсенче текст ăшлăхне çырса кăтартма ыйтнă (*Текст ăшлăхне хăв сăмахусемпе çырса пар. Изложи содержание текста своими словами.*). Ку ĕçе пĕр ача пачах та пурнăçламан. Вĕренекенсенчен виççĕшĕ текст ăшлăхне туллин асăмласа çырса кăтартайман. Пĕр ĕçĕнче çакă хушăва тĕрĕс ăнланманнипе çыхăннă пулмалла. Ача текст содержанине çырса паман, унта мĕн çинчен каланине кĕскен палăртнă кăна. (*Ку текстра эпир Ванюк Эскам йытта çуна çине кӳлсе катаччи чупнине куратпăр.)* Ытларахăшĕ, пĕтĕмĕшле илсен, текст содержанине асăмласа çырма пултарнă. Çапах та ку хутĕнче те вĕсем панă текст çине тĕревленме ăнтăлни курăнать. Тен вĕсен умĕнче хатĕр текст вырнипе çапла пулса тухнă.

Ытти çитменлĕхсем ыйтусене хуравланă май тата текст ăшлăхне хăйсем çырса кăтартнă чухне предложенисене тĕрĕс йĕркелейменнипе çыхăннă. Малтан асăннă предложенире те (*Ку текстра эпир Ванюк Эскам йытта çуна çине кӳлсе катаччи чупнине куратпăр* ) çак çитменлĕхех куратпăр. Ытти тĕслĕхсене те палăртма пулать:

- *Пĕррехинче Ванюк юлташĕсене йытăпа катаччи чуптарчĕ.*

- *Ванюкпа Эскам çуна кӳлсе катаччи чупаççĕ.*

- *Эскам туртайман. Ванюк кăшкăрнă, ăна çапнă*

Хушăран, сайра пулин те, факт йăнăшĕсем те тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен:

- *Пĕррехинче Ванюк катаччи чупма шутлать.*

- *Пĕррехинче Ванюк тусĕсемпе ярăнма шутлать.*

Кун йышши йăнăшсем тăвасси, паллах, ачасем текст ăшлăхне тимлĕн вулама, содержанине пĕтĕмĕшле уçăмланисĕр пуçне унта сăнланнă уйрăм самантсене, вак детальсене тимлеме хăнăхса çитейменнинчен килет.

12-мĕш ĕçсенче ачасене хăйсене панă темăпа килĕшӳллĕ текст йĕркелеме сĕннĕ. Виççĕмĕш класс ачисен сăнлавлă текст (*«Манăн тус» ятлă калав ăсла. Калавунта тусун паха енĕсене çырса кăтарт. Напиши рассказ «Мой друг».В рассказе опиши его хорошие качества.)*, тăваттăмĕшĕсен – калуллă текст (*«Эпĕ кушакпа (йытăпа…) çапла вылятăп» калав ăсла. Напиши рассказ «Как я играю с кошкой (собакой…)»)*калăпламалла пулнă. Ку вăл самай кăткăс, ăславлă ĕç. Сĕннĕ ĕçе çителĕклĕ шайра пурнăçлас пулсан вĕренекенсен чылай ăслай-хăнăху йĕркеленсе çитмелле пулнă. Ачасен хайлавĕсене çак критерисене шута илсе хакланă:

- Хайлавра сĕннĕ темăна çителĕклĕ таран уçса пани (ячĕпе ăшлăхĕ шайлашса тăни).

- Хайлава тĕрĕс тытăмлани, сюжет аталанăвне тĕрĕс йĕрлесе пыни (ĕç е сăнлава çыхăнуллă, йĕркине пăсмасăр, пĕр пулăм çинчен теприн çине куçса каймасăр, темиçе хут каламасăр, сиктерсе хăвармасăр).

- Текстăн жанр тата тĕс уйрăмлăхĕсене шута илсе çырма пултарни.

- Текст калăпăшĕ.

- Текста лексика тата синтаксис телĕшĕнчен тĕрĕс калăплани ( лексика пуянлăхĕ, сăмахсемпе тĕрĕс те вырăнлă усă курни, синонимсемпе тата антонимсемпе, сăнарлăх хатĕрĕсемпе усă курни; предложенисен тĕрлĕ тĕсĕпе усă курни, вĕсене тĕрĕс йĕркелени).

- Текста орфографи тата пунктуаци тĕлĕшĕнчен тĕрĕс çырни. [5]

Ку ĕçе ачасенчен виççĕшĕ пачах та пурнăçламан. Ыттисем, тĕпрен илсен, тăватă ачасăр пуçне, пурте çыхăнуллă калав ăслама пултарнă.

Асăннă критерисене, пĕтĕмĕшле илсен, туллин тивĕçтерекен ĕçсем те пулчĕç. Ку ачасем содержанине темăпа килĕшӳллĕ туллин уçса пама пултарнă. Вĕсен хайлавĕсен ăшлăхĕ ячĕпе килĕшӳллĕ. Ачасем текста кирлĕ пек тытăмлама пултарнă, кашни пайне тивĕçлĕ шайра йĕркеленĕ.Текстсем сюжет аталанăвĕ тĕлĕшĕнчен самай интереслĕ. Калавсен чĕлхи яка, лексика тата синтаксис тĕлĕшĕнчен пуян, сăнарлă. Çакăн пек ĕçсен шутĕнче, тĕслĕхшĕн, çаксене палăртма пулать: «Манăн тус» (Семенова Камилла, 3 класс); «Куша çурипе выляни» (Петрова Софья, 4 класс).

Пĕтĕмĕшле илсен, олимпиадăна хутшăннисенчен ытларахăшĕн калав ăшлăхĕ ячĕпе килĕшӳллĕ. Анчах ячĕпе содержанийĕ шайлашса тăман ĕçсем те тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен, ача хăйĕн калавне «*Эпĕ кушакпа вылянӑ*» ят парать. Калав пуçламăшĕнче хăйсен кушак, унăн çурисем пуррине асăнать те малалла кушак çурисем мĕнле вылянине çырса кăтартать.

Е тата ача хăй кушакпа выляни çинчен каласа парас вырăнне малтан Тигр ятлă кушакне сăнласа парать те унтан вăл тепĕр Моська ятлă кушакпа епле выляни çинчен çырать.

Хăш ĕçсенче панă хушуран пăрăнни те пур. Акă ача хушурипе килĕшуллĕ хăй кушакпа е йытăпа мĕнле вылянине çырса кăтартас вырăнне калавне «*Леопольдпа Барбос*» ят парать те çак чĕр чунсене сăнланине тĕпре туса хурать.

Ачасенчен ытларахăшĕ, тĕпрен илсен, хăйĕн калавне тĕрĕс тытăмланă: пуçламăшне, тĕп пайне, вĕçне тивĕçлĕ калăпланă. Çапах ку тĕлĕшĕнчен те çитменлĕхсем палăрчĕç. Тĕслĕхрен, пĕр ĕçре калавăн пуçламăшĕ те, вĕçĕ те çук: ача тӳрех кушакĕпе вылякан вăйăсене каласа кайнă. Уйрăм ĕçсенче калавăн тытăм пайĕсем пур, анчах тĕп пайне çителеклĕ йĕркелесе çитерейменни курăнать. Сюжет аталанăвĕ те, çыхăнулăх та çук. Тĕслĕхрен, пĕр ĕçре тĕп пайĕнче вăйă тĕсĕсене шутласа кайни çеç:*Эпĕ çăмха перетĕп, вăл унпа чупать. Эпĕ кăранташ ывăтатăп, Мăркка шăлĕсемпе çаклатса килет…*

Çапах та çитменлĕхсенчен ытларахăшĕ текста чĕлхи тĕлĕшĕнчен тĕрĕс, вырнаçуллă калăпласа çитерейменнипе çыхăннă. Хăш-пĕр ача предложенисене, абзацсене тивĕçлĕ йĕркелеймен. Чылай чухне çакă вырăсларан чăвашла куçарса çырнипе пулни курăнать.

- *Эпĕ пианинăпа вылятăп.*

- *Эпĕ тата Шарик шывра ишетпĕр.*

- *Пирĕн килте спорт пӳлĕмĕ пур. Эпĕ унта чупатăп, сикетĕп, çакăнатăп.*

Хăш-хăш предложенисенче вырăсларан куçарнă çаврăмсем тĕл пулаççĕ: *Мурка çăм çыххипе выляма юратать. Çавăнпа эпĕ час-часах унпа вылятăп. Кушак çăм çыххи хыççăн хытă чупать, унпа савăнать, мана питĕ кулăшла.*

Ачасен ĕçĕсенче сăмах шайĕнчи çитменлĕхсем те пулчĕç. Сăмахсемпе вырăнсăр усă курни, предложенисенче сăмахсен йĕркине пăсни тĕл пулать.

- *Кантăкран эпĕ килессе кĕтет.*

- *Эпĕ кушакпа питĕ лайăх выляма юрататăп.*

Хушăран тимсĕрлĕхпе янă йăнăшсем те курăнкалаççĕ: *Эпĕ вĕсене лавккаран илнĕ теттесем ярса паратăп.* Тен, кунта тӳреммĕн куçарни (*ярса паратăп – завожу*). Çапла вара вĕренекенсен текст компетенцине, çыхăнуллă пуплевне аталантарас тĕлĕшпе чылай ыйту тухса тăрать.

Кунсăр пуçне ачасен ĕçĕсенче орфографипе грамматика йăнăшĕсем чылаййине те палăртса хăвармалла пулĕ. Вĕсем сăмахра сас паллисене сиктерсе хăвараççĕ, ылмаштарса çыраççĕ, сăмахсен грамматика вăл е ку формине тĕрĕс калăпламаççĕ, вырăнлă усă курмаççĕ. Ку вара тӳреммĕнех ачасен орфографи тата пунктуаци, грамматика ăслайĕсене йĕркелесе аталантарассипе çыхăннă.

Олимпиада ĕçĕсемпе ыйтăвĕсене калăпланă чухне ачасен культурологи компетенцийĕсен аталанăвне, тĕрĕсрех каласан, вĕсем халăх сăмахлăхĕн туприне хăйсен ӳсĕмĕпе тивĕçлĕ шайра пĕлни-пĕлменнине палăртса хаклассине те тимленĕ. Ачасен ваттисен сăмахĕсене, ытарлă каланисене аса илсе пĕлтерĕшне уçăмлатмалла пулнă (*Ваттисен сăмахне çырса пĕтер. Заверши пословицу. 3. «Хăйне мăнна хурать» тесе кам çинчен калаççĕ? Кого называют человеком, ставящим себя высоко?***)** Ку ĕçсем ачасемшĕн йывăрах пулман пулмалла. Йăнăшсем курăнмарĕç. Апла пулсан вĕрентекенсем ачасене тăван халăхăн сăмахлăхĕн пуянлăхĕпе паллаштарас, вĕсен пуплев сăнарлăхне аталантарас задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе куллен тăрăшаççĕ теме пулать пулĕ.

Çапла вара, олимпиада ĕçĕсене тишкерсе пахалани çакна кăтартать: вĕренекенсем тăван чĕлхене пĕлни, харпăрлани, пĕтĕмĕшле илсен, вĕренӳ программинче палăртнине тивĕçет. Вĕрентекенсене урокра ытларах вĕсен текст компетенцийĕсене калăплас, çыхăнуллă пуплевне пур енлĕн аталантарасстине ятарласа тимлеме сĕнесшĕн.

Тата çакна та палăртса хăварасшăн. Пуçламăш класра чĕлхене вĕрентессин ăнăçулăхĕ ĕçе мĕнле йĕркеленинчен те нумай килет. Юлашки вăхăтра паллă меслетçĕсем чĕлхене вĕрентес ĕç-хĕл лингвистика тата пуплев компоненчĕсене пĕрлĕхлĕ харпăрлассипе çыхăнмалла, чĕлхене вĕрентнĕ май унăн пур сийĕсем пуплевре епле çыхăнса тăнине шута илмелле теççĕ.